Хакĕ 12 пус

# КОЛХОС ачисем



Н. Пиктемир

Ҫăвашистат

Шупашкар-1932

Н. ПИКТЕМИР

# КОЛХОС АЂИСЕМ

(сăвăсем)

*7—10 ÇУЛХИ АЂАСЕМ ВАԒԒИ*

ЂĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИСТАТТĔЛСТВИ
Шупашкар — 1931

Послано в производство 4|VIII-1931 г.
Подписано к печати 4|XII-1931 г.
Отв. редактор Л. Агаков.

Отпечатано в типографии № 1
ЧУВАШГИЗА
Канашская улица, д. № 16
г. Чебоксары

★

Ст. ф. Б. 125×180 Об'ем 0, 75 п. л.

Чувашлит № 1744 Заказ № 1069 Тираж 8100 экз.



## Колхос аҕисем

Пурӑнатпӑр колхосра,
Ҫӗнӗ шухӑш хаљ ӑсра:
Пухӑнар та киллепер,
Епӗр пурте пионер.

Ех, хисеплӗ уй-хирте
Пысӑк савӑнӑҫ иртет,
Шӑнкӑравлӑ йурӑра
Уҫҫӑн сасӑ йанӑрат:

— Ĕмĕт—пысăк кĕнеке,
Епĕр тухнă ирĕке,—
Хурçă ĕмĕр калђисем,
Епĕр—Ленин ађисем.



Йал, çаран, кăтра вăрман...
Пит аван хирте вырма.
Пушăт кунтăк—сар хĕвел,
Тулăх шывлă măн пĕве...

Ак, хаљ епĕр—«ђăх ăсти»,
Пĕтĕм шухăш—çăмарта.
Харăс, харăс, харăстин...
Пурте килтĕр хамăртан.

Пит аван хăйар, кăшман,
Кишĕр, çарăк, купăста;
Пит нумай вĕсен тăшман,
Ех, çапах епир ăста!

Пикенетпĕр хир ĕçне,
Йăлт тупатпăр тивĕçне,
Харăс, харăс, харăстин!..
Епĕр пурте „хир ăсти".

Пурăнатпăр колхосра,
Пысăк шухăш хаљ ăшра,
Пухăнар та килленер,
Пур ĕçе те вĕренер!





# Пахҫа

Шăрлатса йухаҫ ҫырма,
Хĕрринҫе ун хурама,
Айакра—кăтра вăрман,
Лапăра—аҫа-пăҫа
Ӱстерет пĕҫĕк пахҫа.

Пит хитре: йĕркен, йĕркен
Ҫавса тухнă йăрансем.
Тантăш, пăх ес, ан ӱркен:

Ав, шыв урлă пĕр тĕрке
Шур кĕпеллĕ хурăнсем.

Çӳллĕ, çирĕп шĕтĕрнек
Çумне лăпҫăннă ҫеҫек,
Курăнмасть кунта инкек,
Ус-хăравçă, пĕр йĕлме,
Пит аван кунта килме.

Тĕрлĕ çимĕç: мак, хăйар
Кăшман-пăрăç, ку—хăйар.
Çарăкне çисех кайар...
Купăста, сухан, кишĕр,
Çĕрулмийĕ—пит ҫипер.



Аҫисем те-кахал мар,
Ӗҫлеме вӗсем—кӑвар,
Пит пӗлеҫҫӗ йурлама,
Тӗрлӗ вӑйӑ выљама.
Ӗнтӗ ирӗк пурӑнма!



## Вӑрман

Ех, вӑрман—тӑван илемлӗх.
Саншӑн епӗр хӗпӗртетпӗр,
Ҫийӗнти кӑтра кӗрнеклӗх
Такама та илӗртет вӑл.

Уҫӑ сывлӑш тӑп тӑраӑҫӗ,
Ак, самант, вӑл вӑштӑртатрӗ,

Симĕс çӳçлĕ лăс турађĕ
Кăшт-кускалђĕ, кăштăртарĕ.

Ав, йепле сан сисĕм виђкĕн,
—Вăйсăр çил вăрахăн сĕртĕн.
Кайăк сасĕ илтĕнсессĕн,
Ес ăна та ĕнеретĕн.

Çан пекех епир те йышлăн
Çитĕнетпĕр çутă куншăн,
Сан пек сисĕмлĕ пуласшăн
Вăйхала пиллетпĕр уншăн.

## Хирте

Ђакăр пĕлĕт кĕвенти
Çĕклентернĕ çут витре,
Ак, пуçларăм та ĕнтĕ
Çĕнĕ йурă пĕтĕрме.

Лапă ырăн—шыв хĕрри,
Çырă пулнă çĕрĕшсе,
Кăђăрт-кăђăрт!—вăй хĕрет
Çуллапала кĕрешсе.

Ĕх, илемлĕ ĕç çинҫе
Лăпкă ирĕн уççинҫе!..
Лăпкă ирĕн уççинҫе—
Пит илемлĕ ĕç çинҫе!



Шăппăн сывлăм ӳкнипе
Нӳремленнĕ сар ыраш,
Курăк тăрăх таврипех
Çут шăрçа пăхса выртать.

Тăрă Кăкшăм *) çийĕнҫе
Хĕвел ҫӳхет кĕпине,

---

*) Кăкшăм—йухан шыв.

Лăпкă ирĕн уççинҫе
Еп йуратнă ĕç ăнаť.

Ак, тултартăм пилĕк тĕм
Пуçăм кайрĕ шухăша:
„Килеспе ак çак тĕлте
Пурнăç пулĕ тупăшрах.

Урлă-пирлĕ йăрансем
Ҕас тасалĕç хирĕнҫен,
Трактăр çӯрĕ йарăнса...
Вăй-хăваҫĕ пирĕнте!..

Ех, илемлĕ ĕç çинҫе
Лăпкă ирĕн уççинҫе!..
Лăпкă ирĕн уççинҫе—
Пит илемлĕ ĕç çинҫе!..

## Трийĕр килнĕ

Трийĕр килнĕ,
Килнĕ çĕнĕ трийĕр!—
Уçă сассăн
Йăнкăшрĕ урам.
Сайăнсах:



—„Тийес пуљ тырӑ“,—терӗ,
Комсомолӗс—
Çитӗннӗ Упрам.

Шӑлтӑртатрӗ трийӗр,
Шӑлтӑртатрӗ,
Варкӑштарђӗ
Çўплӗ тусана.
Çампӑксем çӗкленнӗ,—
Хӑвӑртлаççӗ,
Ваттисем тӑраççӗ
Çăнарах,

Выҫҫасах ҫавраҫҫĕ
Ҫаранмасăр,
Ҫунасем — йĕркеллĕ
Айакра,
Тăрăшаҫҫĕ ҫамрăксем
Канмасăр:
— «Вăт, машшинă,
Лайăх уйăрать»...

Тасатарха,
Тасатсах акарха,
Кĕлтелентĕр хирĕ
Ҫепĕҫрех,
Хускатарха йулхава,



Тустарха,
Ђаплă çуршăн
Çурĕ кĕçенет.

— Трийĕр килнĕ,
Килнĕ çĕнĕ трийĕр!—
Уçă сассăн
Йанкăшрĕ урам;
Савăнсах:
—«Тийес пуђ тулă»,—терĕ,
Комсомолĕс
Çитĕннĕ Упрам.

## Пĕђĕк вĕрентекен

Аслă пӳлĕм лăк тулли,
Пурте пур: йурри-кулли.
Сасă пађĕ шăнкăрав
Вырнаçмашкăн йăхăрав.

Пухă майĕн уçăлаť,
Пионер сăмах пуçлаť:
«Йулташсем! Апла-капла...
Тĕттĕмлĕх йала хуплаť.



Ваттисем хут пӗлменни—
Пирӗн пурнăç ăнманни,
Йаланах пӗр шут тăвар,
Йӳнеçер çак ыйтăва"...

Каç. Пӳртре шăпах тăрат.
Тек ђупмаççӗ вăйăра.
Тытрӗ Петӗр кӗнеке,
Вăл ӗнтӗ—вӗрентекен.

Ларђӗ амăш йунашар,
Тӳрлетеççӗ йăнăша:

Акку А, ак çакă Н,
Пĕрлештертĕн—пулђĕ АН...

. . . . . . . . . . . . . . . .

Малтанах йăвăртарах,
Ку çапах ђипер вăрах.
Амăш тек пĕлет çырма,
Ăсталаннă вулама.

Савăнаť пĕђĕк Пеťук
Хаљ ĕçсем ун пĕр кĕтў,
Каçсерен вăл хут ĕçне
Вĕрентет хăй пиђђĕшне.





## Саттур Куçук

Пăђкă, пуртă, мăлатук...
Кăђђин-кăђђи-кађђи!..
Ир ирех сатур Куçук
Пысăк сасă пађĕ.

Пиђĕ тăрăх тар йухат̆,
Ĕçĕ пит васкавлă,

Кайăк-кĕшĕк çуйăхать,
Çурăн кунĕ шавлă.

Шăккин-шакки!.. шăккин-шак!..
Çĕнĕ вĕлле хатĕр.
Хĕвелте пиçет кушак,
Вĕллене пăхатĕ...

—„Ђим, тăваймăн сăтăрне,
Шуђĕ пулĕ вăрăм,
Пĕђĕк турăм шăтăкне,
Васкă—ватă вăрă!“..

Шуђă йăвăр. Тăратма
Кирлĕ вăйлă алă.
Куçук тухрĕ урама
Тупăнђĕ „ĕçхалăх“.

Вырнаçтарђĕç, ђăл та пал
Ађасем саланђĕç
Халĕ шавлă йуртăпа.
Килкарти лăпланђĕ.

Ђир-ђир-ђир!.. Ђир-ђир-ђир
Ианăрарĕ йурă,

Вĕçрĕ килҫĕ шăнкăрҫи,
Вĕллене тĕл турĕ.

Ҫас ак тупăнҫĕ тепри,
Иккĕн пурнăç ырă.
Ĕçе тытăнҫĕç вĕсем—
Хыврĕç ăшă вырăн.

Йăслани тек илтĕнет,
Шăнкăрҫа паха ĕç,
Ҫас Куçукăн кăмăлне
Ҫĕпписем те тухĕç.





# Йӗлтӗрпе

Ăшăран тухан тула,
Алсишсем тиртен.
Йӗлтӗрпе йӗрлет çула.
Пăхăнмасп кӗрте.

Пушă вăхăт кăмăла...
Йӗлтӗрпе иртет.
Хам—лаши, хамах—йулан
Сарлака хирте.

Пĕҫĕк ҫăмăл шур тăла,
Вĕлтĕркке ура,
Ҫапах сивĕ манпала
Тупăшма хăрать.

Йерипен хамăн ăшра
Йурă тапранать:
„Сывлăха мĕн ҫамрăкран
Пĕлĕр упрама“.

Лăпкă ҫилĕ йăпшăнать,
Ҫӳхенет тӳлек,
Ман хирте шăна-шăнах
Йарăнас килет.





# Вăйă

Сывлăш уçă. Кун ђипер.
Шыв çинђе хаљ пăр кĕпер.
Таçтанах выртат̆ çырма—
Ирĕк вырăн выљама.

Ђупса анђĕç ађасем...
Ех, вĕсенĕн сассисем!
Пит те уççăн, пит хавас
Йанратаççĕ инçете.

Кăпăш йурĕ çыпăçат̆.
Ак, пĕри ĕçе пуçлат̆:
„Тытăнар та, çын тăвар—
Алтăр куçлă мăн çăвар“.

Кашнинех хистет васкав,
Çитĕнет йуртан каска;
Çилĕ тапхăрăн килет
Ĕçшĕн вăл та килленет.

Сисĕнмест,—ђупаť мехел,
Пит аван çав шурă хĕл.
Турĕç лартрĕç пĕр кулак
Ађисем кула-кулах.

Мăнтăр питлĕ, хăй шыçмак
Пысăк хырăмĕ пиђке.
„Ђăн-ђăнах пуйан Куçма!"
Сасă хыççăн сас сикет.

Ађасенĕн тухнă тар,
Аллисем вĕсен кăвар.
Хăвăрт турĕçĕ пуху,
Çырса хуђĕç пысăк хут:

„Итлĕр, итлĕр, еп—кулак,
Пурнăç манăн пит пылак,
Йал çинђе йалан хайар,
Епĕ ирсĕр мăн çăвар".

Çапрĕç хырăмĕ çине,
Çитрĕ савăнăç тинех
йĕркеленҙĕç пĕр çавра,
Харăс пуçĕнҙĕç йурра:

„Пирĕн пурăнăç—васкав,
Уншăн епĕ пĕр ҙăрмав.
Ей, Куçма, Куçма, Куçма,
Мĕншĕн есĕ пит шыçмак?“

Пĕр купа йур ҙăмăркки,
Çитрĕ тепĕр кун йĕрки:
Пурте тытăнҙĕç пеме...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Куçмаран йулҙĕ тĕме.

Цена 12 коп.

Н. Пиктемир. **КОЛХОЗНЫЕ РЕБЯТА**

Чувашское Государственное Издательство
ЧЕБОКСАРЫ—1932